Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

50 (7475) № * Юн кун, 2007 çулхи июнĕн (çĕртме) 20-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Партисен пурнăçĕнчен

## Конкретлă тĕллевсем палăртнă

***Паллă ĕнтĕ, хальхи вăхăтра çĕршывра тĕп вăйсенчен пĕри вăл «Единая Россия» политика партийĕ пулса тăрать. Вăл тӳрремĕн хутшăннипе юлашки вăхăтра çĕршывра пулса иртекен ырă улшăнусене курса ĕненме пултартăмăр та ĕнтĕ. Иртнĕ шăмат кун вара Шупашкарта Ачасемпе çамрăксен пултарулăх керменĕнче «Единая Россия» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕн XII отчетпа суйлав конференцийĕ иртнĕ. Унăн ĕçне пирĕн район делегацийĕ те хутшăннă. Конференцире татса панă ыйтусем пирки паллаштарма эпĕ тĕплĕнрех конференци ĕçне хутшăннă «Единая Россия» политика партийĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн политканашĕн секретарьне, район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумне Альберт Николаевич ИВАНОВА каласа пама ыйтрăм.***



**– Альберт Николаевич, чи малтанах конференцире сӳтсе явнă ыйтусемпе паллаштарсамăр.**

– Паллă ĕнтĕ, отчетпа суйлав конференцийĕ пулнă май кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусем шутĕнче «Единая Россия» политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕн политканашĕн, тĕрĕслевпе ревизи комиссийĕн отчечĕсене итлесси, политканаша тата ревизи комиссине, политканашăн регион президиумне çĕнĕрен суйласси, Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн VIII съездне ирттерме хатĕрленесси пулчĕç. Çавна каласа хăварасшăн. Конференци ĕçне партин аслă канашĕн членĕ, Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров, Чăваш регион политканашĕн секретарĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ М.А. Михайловский, «Единая Россия» политика партийĕн генеральнăй канашĕн президиумĕн секретарĕн çумĕ К.И. Косачев, Раççей Патшалăх Думин депутачĕ П.В. Семенов тата патшалăхпа парти структуринче вăй хуракан ытти паллă ĕçченсем, «Единая Россия» парти членĕсем – республика Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, делегатсемпе чĕннисем, районсемпе хуласен пуçлăхĕсем, министерствăсемпе ведомствăсен ертӳçисем, наукăпа педагогика общественноçĕн, бизнес-сообщество, культура, вĕрентӳ, сывлăха сыхлас ĕç отраслĕсен представителĕсем, массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсем хутшăнчĕç. Отчетлă докладпа партин Чăваш регион уйрăмĕн секретарĕ Михаил Михайловский тухса каларĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Сăн ӳкерчĕкре: Чăваш Республикин Гимнĕ янăрать.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотисене тивĕçнĕ

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ, «Свобода» хуçалăх, ачасен Муркашри искусство шкулĕ, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики тата Муркаш ял тăрăхĕнчи инвалидсен пуçламăш организацийĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн июнĕн 7-мĕшĕнчи 276 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Николай Петрович КЛЕМЕНТЬЕВА**, педагогика ĕçĕн ветеранне, вĕрентӳ ĕçĕнче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн;

– **Наталия Валерьевна КОНСТАНТИНОВАНА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин кадрсем енĕпе ĕçлекен специалистне, ĕç производствине тивĕçлипе туса пынăшăн тата архив фончĕн докуменчĕсене упрассине тивĕçтернĕшĕн;

– **Антонина Александровна ПЕТРОВСКАЯНА**, ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн;

– **Людмила Алексеевна ЯКОВЛЕВАНА**, Муркашри искусство шкулĕн преподавательне, çитĕнекен ăрăва художество тата эстетика воспитанийĕ парассипе нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн.

Ĕçре малта пыракансем

## Чи лайăх бригадир



***Михаил Гельмасович Иванов Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра бригадир пулса тăрăшать. Шанса панă ĕçе тулли кăмăлпа пурнăçлать. Ĕçне кура вара хисепĕ те. Çакна Михаил Гельмасович тивĕçнĕ Тав хучĕсем те çирĕплетеççĕ. Акă вăл ертсе пыракан бригада район Акатуйĕнче пысăк хисепе тивĕçрĕ. Ăна район пуçлăхĕ пĕрремĕш степеньлĕ диплом, “2007 çулхи чи лайăх уй-хир бригадирĕ” куçса çӳрекен вымпел тата укçан преми парса тав турĕ. Çакă вара малашне татах та хавхаланулларах ĕçлеме хистĕ.***

***Сăн ӳкерчĕкре: Михаил Гельмасович Иванов.***

***Р. ИЛЛАРИОНОВА***
***сăн ӳкерчĕкĕ.***

Симĕс ĕç çи

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ИЮНĔН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ ХАТĔРЛЕС ĔÇ ЕПЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Колонкăсенче: Нумай çул ӳсекен курăксене çулнă гектарпа тата процентпа.**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 25 | 6 |
| “Волга” | 90 | 15 |
| “Восток” | 70 | 31 |
| “Герой” | 16 | 6 |
| К. Иванов яч. хис. | 2 | 1 |
| Ильич яч. хис. | 130 | 27 |
| Ленин яч. хис. | 3 | 1 |
| “Лидер” | 10 | 2 |
| “Дружба” | 0 | 0 |
| “Оринино” | 70 | 11 |
| “Передовик” | 104 | 12 |
| “Свобода” | 55 | 13 |
| “Сеятель” | 65 | 10 |
| Суворов яч. хис. | 35 | 5 |
| “Рассвет” | 60 | 12 |
| “Нива” | 0 | 0 |
| “Ударник” | 40 | 3 |
| Чапаев яч. хис. | 60 | 18 |
| “Чемеево” | 63 | 21 |
| Чкалов яч. хис. | 50 | 61 |
| КФХ Михайлов | 70 | 12 |
| КФХ Бархаткин | 30 | – |
| **РАЙОНĔПЕ** | **1048** | **8** |

Июнĕн 22-мĕшĕ – Асăнупа хурлăх кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче нимĕç фашизмĕ пирĕн çĕршыв çине нимĕн пĕлтермесĕр тапăннă. Ку кун – Асăнупа хурлăх кунĕ. Эпир Тăван çĕршыв чиккисене хӳтĕлеме тăнă тата Аслă Отечественнăй вăрçăра пуçĕсене хунă салтаксене яланах асра тытатпăр.

Эпир мирлĕ пурнăçпа пурăнассишĕн пирĕншĕн пуç хунисене манма тивĕç мар. Пирĕн салтаксен махтавлă çарĕ тăван çĕрĕн кашни лаптăкĕшĕн çапăçнă, Европăна тата пĕтĕм тĕнчене чуралăхран сыхласа хăварнă. Вăрçă трагедийĕ тепĕр хут пулмалла марах. Çавăнпах ĕнтĕ пирĕн çак иртнĕ вăхăт синкерлĕхне манмалла мар, ăна пулас ăрусене туйса илме пулăшмалла. Тĕнчере туслăха сыхласа хăварассишĕн тата çĕршыв чысне-сумне ӳстерсе пырассишĕн хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тăвăпăр.

Йывăр вăхăтра хăйсен тивĕçне пурнăçласа Тăван çĕршыва сыхласа хăварассишĕн хăйсен пурнăçне панисен умĕнче пуç таятпăр.

**Павел СЕМЕНОВ,**
**РФ Патшалăх Думин депутачĕ,**
**«Единая Россия» фракци членĕ.**

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Юратнă мăшăра, аннене, асаннене, хунямана, тăхлачăна, çывăх тăванăмăра – Мăн Сĕнтĕр ялĕнче пурăнакан **Ираида Дмитриевна НИКОЛАЕВАНА** 50 çул тултарнă ятпа чунтан тухакан чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр. Сана юбилей ячĕпе саламласа мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул. Ĕмĕрӳ чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр. Мăшăру, ачусемпе мăнуку, çывăх тăвансем сана яланах савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр. Пурнăçу яланах ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

**Пысăк салампа мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕсем, кинĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕ, çывăх тăванĕсем, хăтисемпе тăхлачисем.**

Эсир ыйтнипе

## Пенси виçине ӳстерес тетĕр-и?

***Паян хаçат вулакансен ĕç пенсийĕн страхлакан пайне çĕнĕрен шутласа парассипе çыхăннă ыйтăвĕсем çине РФ Пенси фончĕн районти уйрăмĕн пенсисем шутласа парассин тата çĕнĕрен шутласа парассин пайĕн пуçлăхĕ Надежда Геннадьевна СЕМЕНОВА хуравлать:***

**– Ĕçлекен пенсионерсен хăйсен пенси шайне ӳстерес майĕсем пирки мĕн калама пулать?**

– Ĕç пенсийĕсем пирки калакан саккун халĕ ĕçлекенсене те, пенси илсе тăракансене те хăйсен пурнăçне активлă ĕç-хĕлпе çыхăнтарма майсем туса парать.

2002 çултан тытăнса ĕçлекен пенсионерсен пенсие пĕтĕмĕшпех илсе тăнă чухнех ĕçлесе пенси шайне çуллен ӳстерсе пыма май пур. Ĕç укçи шайĕ мĕн чухлĕ пысăкрах, пенси фондне харпăр хăйĕн лицевой счечĕ çине те çавăн чухлĕ нумайрах укçа куçать, страхланă çыннăн пенси капиталĕ пысăкланать, апла пулсан унăн пенси виçи те ӳсет.

**– Кун пек чухне пенсие хăш вăхăтран çĕнĕрен шутласа пАраççĕ?**

– Çынна пенси пама тытăннăранпа е ĕçленине кура ĕç пенсийĕн страхлакан пайне çĕнĕрен шутласа панăранпа 12 уйăх иртнĕ пулсан, пенси виçине çĕнĕрен шутлаттарма май пур.

**– Ку тапхăрта 12 уйăх ĕçлени кирлĕ-и?**

– Кирлĕ мар. Калăпăр, çак тапхăрта тен эсир 5 кун кăна, 1 уйăх е ытти чухлĕ вăхăт ĕçленĕ пулсан та, пенси виçине çĕнĕрен шутлаттарма пулать. Чи кирли – ĕç паракан сирĕншĕн пенси фондне страховани взносĕсене тӳлесе тăни.

**– Пенси виçине çĕнĕрен шутлаттарма заявлени çырмалла-и?**

– Паллах. Пенсионер заявлени çырмасăр пенси виçине çĕнĕрен шутласа памаççĕ. Пенси виçине çĕнĕрен шутлаттарма вăхăт çитнĕ пулсан, кирек хăçан та заявлени çырса пама пулать.

**– Тĕслĕхсемпе çирĕплетсен аванччĕ.**

– Калăпăр, çынна пенси 2006 çулхи февралĕн 3-мĕшĕнчен тытăнса парса тăма пуçланă. Унăн 2007 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнчен тытăнса пенси виçине çĕнĕрен шутлаттарма май пур, тепĕр майлă каласан, 12 уйăхран.

Енчен те çын унччченех пенсие тухнă тата пенсие çĕнĕрен шутлаттарма 2006 çулхи март уйăхĕнче заявлени панă тата пенси виçине çĕнĕрен 2006 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен шутласа панă пулсан, тепĕр хут унăн заявлени 2007 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче çырма юрать.

**– Пенси виçине çĕнĕрен мĕн вăхăтран тытăнса шутласа параççĕ?**

– Çĕнĕрен пенси виçине пенсионер заявлени çырнă уйăх хыççăнхи уйăхăн 1-мĕш числинчен çĕнĕрен шутласа параççĕ. Заявление пĕрремĕш çур çулта панă пулсан, çĕнĕрен шутласа памалли технологипе килĕшӳллĕн июльтен тытăнса вăл çĕнĕрен шутласа палăртнă пенси илме тытăнать, унччченхи уйăхсемшĕн хушса тӳлеççĕ.

**– Мĕнле документсем кирлĕ пулаççĕ?**

– Çын кам пулнине, вăл миçе çултине, ăçта пурăннине, унăн гражданлăхне çирĕплетекен документ (паспорт, çыннăн вăхăтлăх удостоверенийĕ) çумра пулмалла. Кунпа пĕрлех пенсионерăн обязательнăй пенси страхованийĕн страховани свидетельстви кирлĕ пулать.

**– Мĕн чухлĕ ӳсет-ха пенси виçи?**

– Вăл мĕн чухлĕ ӳсесси ĕç паракан сирĕн пенси фондĕнчи лицевой счет çине страховани взносĕсем мĕн чухлĕ куçарса панинчен килет.

**– Кунта та тĕслĕх илсе кăтартни вырăнлă пулĕ.**

– Ватлăх енĕпе пенсие 1998 çулхи январĕн 10-мĕшĕнче пама пуçăннă тейĕпĕр. Пенси илсе тăнă вăхăтра ĕçленĕшĕн ĕç пенсийĕн страхланă пайне ӳстерме пенсионер 2007 çулхи январьте заявлени çырса панă. Унăн ĕç пенсийĕн страхлакан пайне палăртнăранпа (2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕ) пенси виçине çĕнĕрен шутлаттарма заявлени çырнă хушшинчи страховани взносĕсен сумми 6580 тенкĕпе танлашать. Çĕнĕрен шутланă хыççăн пенси виçи 54 тенкĕ те 83 пус ӳсет (6580 тенкĕ: 12 уйăх (хушма тӳлев вăхăчĕ) = 54 тенкĕ те 83 пус).

Пенсие çĕнĕ виçепе 2007 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса тӳлеме пуçлаççĕ. Кунпа пĕрлех июль уйăхĕнче февральтен тытăнса июньччченхи тапхăршăн хушса тӳлеççĕ.

Çырăнтару – 2007

## Райхаçат çырăнакансене парнесем кĕтеççĕ






**Хаклă вулакансем! Çырăнтару тапхăрĕ вĕçлениччен вăхăт нумай мар. “Çĕнтерӳ ялавне” çырăнса илме васкăр!**

**“Çĕнтерӳ ялавне” 6 уйăха çырăнакансем хушшинче лотерея вылявне ирттеретпĕр.**

**Чи телейлисене тĕслĕ телевизор, СВЧ-кăмака, DVD-плеер, утюг, чейник, телефон, миксер, фен тата ытти хаклă та паха парнесем кĕтеççĕ.**

**Иккĕмĕш çур çулта та пĕрле пулар!**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли хак – 147 тенкĕ те 42 пус.**

**Райхаçат редакцийĕ.**




